Ырă хыпар

# Çитес çултан пенси ӳсет

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

**- Валоризаци тунă чух ĕç стажне миçе çул таран йышăнмалла тунă?**

- Халĕ пенси капиталне шутланă чухне хĕрарăмсен чи пысăк стажĕ – 40 çулпа, арçынсен - 45 çулпа танлашать. Ватлăхра паракан пенсие çăмăллăхсемпе усă курса малараx тухнă граждансен хăш-пĕр категорийĕсемшĕн вара чи пысăк стаж тата сахалтарах. Калăпăр, пилĕк е ытларах ача çуратнă, вĕсене сакăр çула çитиччен пăхса ӳстернĕ хĕрарăмсен - 35 çул, куç курманнипе 1 ушкăнри (III-мĕш степень) инвалидсен: арçынсен - 35 çул, хĕрарăмсен - 30 çул.

Валоризаци коэффициентне шутланă чух вара пĕтĕм ĕç стажне йышăнмалла тунă. Валоризаци йĕркипе 2002 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен-хи пенси ирĕкне хакланă чухне стажа кĕртнĕ тапхăрсенех шута илеççĕ, анчах та ăна чикĕлемеççĕ.

Валоризаци пирки пенси капиталĕ мĕн чухлĕ ӳсесси ĕç стажĕнчен килет. Çавна май кашни çыннăн пенси хăпарни тĕрлĕрен пулать.

**- Çитес çултан пенси мĕн чухлĕ хушăнассине пенсионер хăй тĕллĕн шутлама пултарать-и?**

- Пенсионер 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн ĕçлемен пулсан, пенси мĕн чухлĕ ӳснине кăçалхи декабрь уйăхĕнче илекен ĕç пенсийĕн страховани пайне валоризаци процентĕ çине хутласа шутлама пулать.

Тĕслĕхрен, пенсионерăн 1991 çулччен-хи ĕç стажĕ 46 çул та 1 уйăх. 2002-мĕш çул хыççăн ĕçлемен. 2009 çулхи декабрь уйăхĕнче унăн ĕç пенсийĕн виçи 4482 тенкĕ, вăл шутра 2562 тенкĕ - тĕп пайĕ (1-мĕш декабрьтен ӳстернине шута илсе), 1920 тенкĕ - страховани пайĕ.

Валоризаци валли тулли 46 çул стажа тĕпе хураççĕ. Пенсин страховани пайĕ 1991 çулччен-хи кашни çулталăкшăн 1-ер процент ӳстернипе 46 процент хăпарать тата 2002-мĕш çулччен ĕçленĕшĕн 10 процент пысăкланать – пĕтĕмĕшле хушăм 56 процентпа танлашать.

Халĕ çакна укçа çине куçаратпăр, пенсин страховани пайне валоризаци процентĕ çине хутлатпăр – 1920 тенкĕ х 0,56 (ноль тулли те алă ултă çĕрмĕш çине хутлани) 1075 тенкĕ те 20 пуспа танлашать. Валоризаци тунă ӳсĕм - 1075 тенкĕ те 20 пус.

Çапла вара пенсин пĕтĕмĕшле виçи 5557 тенкĕ те 20 пуспа танлашать, вăл шутра: 2562 тенкĕ - пенсин тĕп пайĕ, 2995 те 20 пус – страховани пайĕ.

Пенсионерăн 2002 çул хыççăн ĕçленĕшĕн страховани взносĕ пур пулсан е пенси виçине страховани туман тапхăрсемпе те шутланă пулсан - кăткăсрах. Кун пек чух валоризаци ӳсĕмне пĕлес тесен малтан 2002-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕччен-хи пенси капиталне валоризаци коэффициенчĕ çине хутламалла. Кайран ăна 2002-мĕш çултан пуçласа кăçалхи декабрь уйăхĕччен-хи ĕç пенсийĕн страховани пайне индексациленĕ коэффициентсем чухлĕ ӳстермелле.

**- Эсир страховани туман тапхăрсем çинчен асăнтăр. Мĕнле тапхăрсем вĕсем? Валоризаци ӳсĕмне кĕреççĕ-и вĕсем?**

- Страхованине кĕмен тапхăрсем шутне, амăшĕ ачана çулталăк çурă тултариччен ĕçре шутланса тăмасăр пăхнă тапхăр, 1-мĕш ушкăнри инвалидсене, сусăр ачана е 80 çула çитнĕ ватта пăхнă тапхăр, çар çыннисен мăшăрĕсем ĕçе вырнаçма май çук вырăнсенче пурăннă тапхăрсем тата ытти хăш-пĕр тапхăрсем шутланаççĕ.

Пенси фондне çак асăннă страховани туман тапхăрсемшĕн хальхи вăхăтра патшалăх укçан саплаштарать. Çак йĕркепе ĕç пенсийĕн страховани пайĕ ӳсет. Валоризаци тунă чух ăна шута илмеççĕ.

**- Валоризаци тунă чухне стажа мĕнле йĕркепе шутлаççĕ, тĕслĕхрен, Инçет Çурçĕрте ĕçленине?**

- Расчетлă пенси капиталне палăртнă чух пĕтĕмĕшле ĕç стажне мĕнле йĕркепе усă курса шутланă, валоризаци тунă чухне те стажа çав йĕркепех шутлаççĕ. Калас пулать, хальхи вăхăтра пенси капиталне палăртнă чух Инçет Çурçĕрте ĕçленине икĕ тĕрлĕ илме пулать. 1990 çулта йышăннă кивĕ саккунпа усă курсан, пĕр çулталăк ĕçлени çулталăк çурăпа танлашать, халĕ вăйра тăракан саккунпа килĕшӳллĕн - стажа календарлă кĕрет. Пенси капиталне çак саккунсен йĕркисемпе шутласа пăхаççĕ, хăш саккунпа пенсионерăн пенсийĕ пысăкрах пулать, çавна суйласа илсе пенси виçине палăртĕç.

**- Килес çулта пулакан валоризаци пур пенси илекенсене те тивет-и?**

- Килес çулхи валоризацие ĕç пенсине илекенсем кăна тивĕçлĕ пулаççĕ - ку вăл ватлăхпа, инвалидлăхпа тата тăрантарса пурăнакана çухатнипе ĕç пенсийĕ илекенсем. Çав шутра Пенси фондĕнче страховани пайне илекен çар пенсионерĕсем те. Валоризаци шучĕпе ĕç пенсийĕн страховани пайне ĕç стажне кура ӳстереççĕ. Социаллă пенсисене валоризаци тумаççĕ.

**- Пенси прависене стажа кура çĕнĕрен хаклас тесен пенсионерăн заявлени çырса памалла-и?**

- Пенси прависене çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен валоризацилессине пенси валли тăратнă хутсем тăрăх шутлаççĕ, ăна палăртма заявлени кирлĕ мар.

Енчен те пенсионерăн хăйĕн пенсине ӳстерме пулăшакан документсем пур пулсан, калăпăр, 1991-мĕш çулччен ĕçлени çинчен, çак хутсене Пенси фончĕн районти управленине çитерсе памалла, заявлени çырмалла. Енчен те вĕсене кăçал е çитес 2010 çул вĕçлениччен çитерсен, валоризаци укçине саккун вăя кĕнĕ кунран (2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен) тытăнсах тӳлĕç, 2011 çулта çитерсен - заявлени панă хыççăнхи уйăхăн 1-мĕшĕнчен.

Хальхи вăхăтра РФ Пенси фончĕн управленийĕсем хушма документсем йышăнаççĕ. Ыйтусем пулсан «тӳрĕ» çыхăну телефонĕпе хурав илме пулать. Ун пек пулăшу телефонĕсемпе районсемпе хулари управленисенче те, республикăри Пенси фончĕн уйрăмĕнче те ĕçлеççĕ. Республикăри уйрăм телефонĕн номерĕ: 58-59-45. Районти управлени телефонĕ: 62-8-91.

Ыйту – хурав

# Укçа фонда куçать е...

***Çавна ыйтса пĕлес килет. Вилсе кайнă страхланă çыннăн тăван-пĕлĕшĕ çук пулсан, унăн пухăнакан пенси сумми кама тивĕçет? Тата çак суммăна кам илме тивĕç?***

**В. ИВАНОВ.**

– Пухăнакан пенси суммине илме тивĕç çын (правопреемник) саккунпа е заявлени çырса хăварнипе çук пулсан, ку укçа-тенкĕ Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн резерв шутне куçать.

Вилсе кайнă çыннăн пухăнакан пенсийĕн суммине илме тивĕççисем шутне çаксене кĕртеççĕ:

– чи малтанах: ачисене (вăл шутра усрава илнисене те), мăшăрне, ашшĕ-амăшне;

– хыççăн вара: пиччĕш-шăллĕсене, йăмăкĕсемпе аппăшĕсене, аслашшĕсемпе асламăшĕсене, мăнукĕсене.

Юбилей

# Чăннипех ăшă сăмаха тивĕçлĕ



Тĕрĕсех ĕнтĕ, аннерен хакли тĕнчере никам та çук. Темĕнле ăшă та хăтлă пӳрт-çурт та анне çук чухне пуш-пушă та сивĕ. Вăл ĕçре чухне те куççем ăна шыраççĕ. Çăмăлах мар çав аннесене.

Пирĕн анне, Пăсăрман ялĕнче пурăнакан Галина Ивановна Крысина, 1949 çулхи ноябрĕн 13-мĕшĕнче Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче çуралнă. Ачаллах ĕçе кӳлĕннĕ.

1967 çулта вăл Патăрьелĕнчи ветеринари училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Муркашри ветеринари станцине ĕçлеме килнĕ, кунта ветеринарта тимленĕ. Кайран вара ун чухнехи «За коммунизм» колхозра осеменатор, ветеринар тивĕçĕсене пурнăçланă. Хушнă ĕçшĕн ответлăха çирĕп туйнă.

Ĕçленипе пĕрлех вăл пĕлӳ, ăсталăх шайне ӳстерсе пырасси пирки те манман. Хăй ĕçлекен профессипех Чăваш ял хуçалăх институтне те вĕренсе пĕтернĕ. 1997 çултанпа вара «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхра Кашмашри сысна ферминче ветеринарта тимлет.

Галина Ивановна 1949 çулта вăл вăхăтра уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçлекен Яков Крысинпа çемье çавăрнă, икĕ ывăлпа пĕр хĕр пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă. Вĕсем пурте аслă пĕлӳ илнĕ, хăйсем çемьеллĕ ĕнтĕ. Галина Ивановнан халĕ 7 мăнук.

Çак кунсенче пирĕн анне хăйĕн 60 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа эпир ăна савса çапла калатпăр:

Аннеçĕм, анне! Санăн ырă ятна<br>
Чĕрем çумĕнче эпир упратпăр.<br>
Ачаш та йăваш тарават сăнна<br>
Тĕлĕкре те куллен куратпăр.<br>
Аннеçĕм, анне! Таса чунăмпа<br>
Çакна шантарсах калатпăр:<br>
Пăхса ӳстернишĕн сана тав туса<br>
Çĕре çитиччен пуç таятпăр.<br>
Чăнах та санран хакли çук,<br>
Хĕвел пек хĕрӳ çыннăм, анне.<br>
Çук санран çывăх çын тĕнчере,<br>
Эс кӳретĕн кил-çурт илемне.

**Юратнă ачисем, мăшăрĕ.**

Ырă йăла-йĕрке

# Кĕрхи уявăн чи маттур пики

Çулсеренех кĕрхи ĕçсене вĕçлесен Москассинчи Культура çуртĕнче çамрăксемпе пĕрле уяв йĕркелесе ирттеретпĕр. Кăçал та çак йăлана манăçа кăларас темерĕмĕр.

Октябрь вĕçĕнче канмалли кун Культура çуртне çамрăксем хаваспах пухăнчĕç. Зала кĕрсен вара ылтăн вăрмана лекнĕнех туйăнать. Ирина Петрова уяв каçне кĕрхи куна саламласа сăвă йĕркисемпе пуçларĕ. Уяв каçне илемлетекенĕ вара Муркашран ятарласа йыхравланă Людмила Митрофанова пулчĕ. Уяв тăршшĕпех вăл хăйĕн илемлĕ ташшисемпе çамрăксене савăнтарчĕ.

Хĕрсем хушшинче вара хĕрӳ конкурс пулса иртрĕ. Илемлĕ те яштака 6 хĕр уяв каçĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартрĕ, темĕн тĕрлĕ ĕç те пурнăçларĕ. Вĕсен ĕçĕсене сумлă жюри хак пачĕ.

Пурте маттур пулчĕç çак конкурсра. Чи маттуррине суйласа илме çăмăл пулмарĕ хак паракансене. Çапах та çак конкурсра Кĕрхи уявăн хĕрĕ Татьяна Андреева пулса тăчĕ, «Ылтăн кĕрĕн» пуç кăшăлне тивĕç пулчĕ. Çак конкурса хутшăннă пур хĕрсем те хаклă парнесем илме тивĕç пулчĕç. Лотерея вылявĕ те туса ирттертĕмĕр. Ирина Петрова уява питĕ ăста ертсе пычĕ. Уяв каçĕ пурин кăмăлне те кайрĕ.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ.**

Ылтăн туй

# Алла-аллăн – алă çул

Москакасси ялĕнчи Худяковсен çемйинче çак кунсенче пысăк уяв пулса иртрĕ. Галина Александровнапа Виктор Митрофанович пурнăç çулĕпе утма пуçланăранпа 50 çул çитнине чаплăн паллă турĕç. Çак телейлĕ мăшăра саламлама 2 хĕрĕ, 1 ывăлĕ, вĕсен мăшăрĕсем, 7 мăнукĕ, 1 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем пуçтарăнчĕç. Ырă сăмахсемпе нумай саламламарĕç вĕсене.



Çак мăшăр мĕнле майпа пĕр-пĕрне тупни çинчен ыйтсан, Виктор Митрофанович хаваспах каласа пама килĕшрĕ. Муркашра пурăнакан Галина Александровна 1958 çулта комсомол путевкипе Алтай тăрăхĕнчи Тальмен районĕнчи Перуново салине чукун çул тунă çĕре тухса каять. Çавăн пекех Воронеж облаçĕнчен те çамрăксем путевкăпа çула тухаççĕ. Шăп та лăп çакăнта паллашма тӳр килет те çак çамрăксене. Викторăн чĕри вара чипер хĕре курсан сар çу пекех ирĕлет. Пĕрре курсах юратса пăрахать чăваш çĕрĕнчен килнĕ Галинăна. Савнă хĕре курас тесе 6 çухрăм тайга витĕр утмалла пулать Викторăн. Çапла вара 1959 çулхи октябрĕн 20-мĕшĕнче пĕр мăшăр пулса тăрать çак икĕ юратнă чун.

Икĕ хĕрпе пĕр ывăл çуратса пăхса ӳстернĕ вĕсем. Пурнăç çулĕпе шăкăл-шăкăл утса, пĕр-пĕрне ăнланса, килĕштерсе те юратса пурăнаççĕ халĕ те Галина Александровнапа Виктор Митрофанович. Ачисемпе мăнукĕсем çине пăхса ытараймаççĕ.

**Г. ГОЛУБЕВА,**
**хĕрарăмсен канашĕн председателĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Галина Александровнапа Виктор Митрофанович Худяковсенчен телейлĕрехххи çук та паян.**

Пулăшу ыйтатпăр

# Пуçланă ĕçе вĕçне çитересчĕ

Эй, тăвансем! Хисеплĕ ялйыш, пĕлĕш-хурăнташсем, аякра пурăнакан ентешсем!

Ватă асаттесен йăли-пилĕсене малалла тăсар. Чуна тасатма, ăс-кăмăл туйăмне çӳлти шайра тытса тăма, пĕрле пухăнса Турă умĕнче кĕлĕ тума Таса вырăн – чиркӳ кирлех. «Чиркӳ мĕнле – халăхĕ çапла»,– тенĕ.

Сурăм тăрăхĕнчи Йӳçкасси ялĕнчи иртнĕ ĕмĕрсенче Çветуй Николай ячĕпе уçнă чиркĕве çĕнетсе хута яма юсав ĕçĕсем пуçланнă. Христос çӳле çĕкленнин хăвачĕпе куполпа хĕресе хăйсен вырăнне вырнаçтарнă. Чан çакмалли чиркӳ тăррине хатĕрлесе çитернĕ.

Чиркĕве туса пĕтерме проектпа 4 миллион çурă тенкĕ укçа кирлĕ. Авалтанпах асăнмалăх çурт-йĕре тата палăксене халăхпа пĕрле тунă. Çак пысăк ĕçе пурнăçлама пулăшакансен хисепĕ ӳссех пырать. Хăшĕсем укçан, теприсем строительство материалĕсемпе, тӳлевсĕр ĕçлесе пулăшакансем те пур. Вĕсен йышĕ 400 çынран та иртрĕ. Çапла вара Йӳçкассинче капмар çуртсем хушшинче «Сурăм çăлтăрĕ» мăнаçлăн ялкăшса таврана илем кӳме тытăнĕ.

Хисеплĕ юлташсем!

Пуçланă ĕçе вĕçне çитересчĕ тесе ыр кăмăллăх фондне хутшăнмасăр ан юлăр. Çуталса ларакан куполсен пайăркинче, чансен илемлĕ сассинче «кунта ман тӳпе те пур» тесе çынсем умĕнче, ăшра та хăюллăн каламалла пултăр.

Пулăшни сая каймасть, ырăпа таврăнать. Акă Юрий Петров пĕр «КамАЗ» хăма килсе пушатрĕ. «Тахçанах пулăшас тенĕччĕ, халь чуна та çăмăллăх килчĕ»,– тет вăл.

Хăвăрăн ирĕкпе, ырă кăмăлпа уйăракан укçа-тенкĕне «Россельхозбанк» урлă та, почтăпа е алăран Прихут кассине те хывма пулать. Пулăшакана Турă та пулăшать. Çапла пултăр! Турă сире пулăштăр!

Реквизитсем çапла:

Местная православная религиозная организация

Приход православной церкви Вознесения Христова села Юськасы Моргаушского района Чувашской Республики Чебоксарско-Чувашской Епархии Русской Православной Церкви



ИНН 2112390480,<br>
КПП 211201001<br>
Р/с 40703810811100000015<br>
Чувашский РФ ОАО «Россельхозбанк»<br>
г. Чебоксары, БИК 049706752<br>
К/с 30101810600000000752

**Прихут Канашĕн**
**председателĕ**
**З.М. КУТУЗОВ.**